**Хура мĕлкеллĕ шур тĕнче**

Хура мĕлкеллĕ шур тĕнче
Çӳрет хĕвел çаврăмĕнче.
Мĕлке пурне те хăратать,
Пуç тӳпинчен пăс кăларать.

Хура мĕлке чакмасть – ӳсет,
Хуплать çĕре, чун сӳлетет...
Килет хăратмăш хамăртан –
Хăв мĕлкӳнтен епле хăпан.

Сых туйăм ун çулне пӳлет.
Çуйланчăк чунăмçăм сисет:
Хура мĕлке пĕтет иккен
Хĕвел тухсан çын хĕвĕнчен.

Хура мĕлкеллĕ шур тĕнче
Çӳрет кун-çул çаврăмĕнче.
Шевли ӳкет юратуран,
Мĕлки тухать хаярлăхран.

Шевле сапар-и хамăртан –
Хĕври ăш пиллĕ çутăран?
Мĕн-ма тесен чăн-чăн тĕнче
Пурнать кашни çын чунĕнче.

*Ишентей, Н. Хура мĕлкеллĕ шур тĕнче / Н. Ишентей // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 547.*